ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "СУНАР ЁÇЁ ТАТА СУНАР РЕСУРСЁСЕНЕ УПРАСА ХĂВАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашё
2024 çулхи раштав уйăхён 24-мёшёнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Сунар ёçё тата сунар ресурсёсене упраса хăварасси çинчен" 2011 çулхи ака уйăхён 1-мёшёнчи 15 №-лё саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашён ведомоçёсем, 2011, 89 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунёсен пуххи, 2013, 12 №; 2016, 12 №; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, çёртме уйăхён 27-мёшё; 2019, утă уйăхён 17-мёшё; 2020, ака уйăхён 29-мёшё, çёртме уйăхён 17-мёшё; 2021, раштав уйăхён 29-мёшё; "право21.рф" сеть кăларăмё, 2022, раштав уйăхён 2-мёшё, 0000000000000330 №) çакăн пек улшăнусем кёртес:

1) 7 статьян 5–7-мёш пункчёсенче "Чăваш Республикин ёç тăвакан власть органён" сăмахсене "Чăваш Республикин ёç тăвакан органён" сăмахсемпе улăштарас;

2) 8 статьяра:

а) 3-мёш пунктра "(Чăваш Республикин патшалăх программисен çум программисене)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 4-мёш пунктра "Чăваш Республикин ёç тăвакан влаçён органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ёç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

3) 9 статьяра:

а) ятĕнче тата пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 6-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"6) Чăваш Республикин территорийĕнче, федераци пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсемсĕр пуçне, çурма ирĕк условисенчи тата искусствăлла майпа тунă вырăнсенчи сунар ресурсĕсене (Раççей Федерацийĕн Хĕрлĕ кĕнекине тата Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ сунар ресурсĕсемсĕр пуçне) тытса усрама тата ĕрчетме ирĕк парасси, çавăн пекех çавнашкал ирĕк панисен реестрне тытса пырасси;";

б) çакăн пек çырса 12^5-мĕш тата 12^6-мĕш пунктсем хушса хурас:

"12^5) Чăваш Республикин территорийĕнче, федераци пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсемсĕр пуçне, федераци патшалăх сунар тĕрĕслевне (надзорне) пурнăçлакан патшалăх сунар инспекторĕсен пурнăçĕпе сывлăхне страхласси;

12^6) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă полномочисен шайĕнче сунар ĕçĕ тата сунар ресурсĕсене упраса хăварас енĕпе ĕçлекен патшалăх информаци тытăмне информаци вырнаçтарасси;";

в) çакăн пек çырса 12^7-мĕш пункт хушса хурас:

"12^7) сунар минимумне кĕрекен пĕлĕве тĕрĕслесси тата çавнашкал тĕрĕслев результачĕсене палăртасси;";

4) 15 статьяра:

а) 2-мĕш пайра:

виççĕмĕш абзаца "(малалла – кашкăрсем тытнă физически сăпатсем)" сăмахсем хушса хурас;

улттăмĕш абзацра "кашкăрсен шутне йĕркелес енĕпе ирттерекен мероприятисене хутшăннă" сăмахсене "кашкăрсем тытнă" сăмахсемпе улăштарас;

çиччĕмĕш абзацра "кашкăрсен шутне йĕркелес енĕпе ирттерекен мероприятисене хутшăннă" сăмахсене "кашкăрсем тытнă" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 3-мĕш пайăн пиллĕкмĕш абзацĕнче "кашкăрсен хисепне йĕркелес енĕпе ирттерекен мероприятисене хутшăннă" сăмахсене "кашкăрсем тытнă" сăмахсемпе улăштарас;

б) 6-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 3-мĕш пункчĕн "ă" тата "в" çум пункчĕсемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 3-мĕш пункчĕн "ă" тата "в" çум пункчĕсем 2025 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
99 №